Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

56 (8017) № ✻ Юн кун, 2012 çулхи утă (июль) уйăхĕн 25-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ăрусен çирĕп çыхăнăвĕ

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче

1976 çулта вăтам шкул пĕтернĕренпех Раиса Ананьевна Блинова (сăн ӳкерчĕкре сулахайри) хăйĕн пурнăçне «Оринино» пĕрлешӳллĕ хуçалăхри выльăх-чĕрлĕх отраслĕпе çыхăнтарнă. Çак тапхăрта вăл ĕне те сунă, пăрусем те пăхнă, пĕлӳ çулĕнчен пăрăнмасăр техник-осеменатор специальноçне алла илсе ĕçленĕ, ытти ĕçсенчен хăпмасăрах пĕр çул мар лаборантка тивĕçĕсене пурнăçланă. Юлашки 11 çулта вара ăста хĕрарăм Патаккассинчи сĕт комплексне ертсе пырать. Ăнăçусемсĕр те мар. Çак вăхăтра ферма коллективĕ районта ĕçпе те, тирпейлĕхпе те ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăчĕ. Кунта ĕçлекенсем сĕт сăвакансемпе техник-осеменаторсен районти, республикăри конкурсĕсенче те пултарулăхпа пĕрре мар палăрнă.

Раиса Ананьевнăн çамрăк тусĕ – Алина Петровна Алибекова. Вăл пуян опытлă ĕçчен хатĕрленĕ черетлĕ çамрăк специалист. Алина Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕ хыççăн 2011 çултанпа хуçалăх производствинчи ветеринари фельдшерĕ. Вăл аслисен ĕçне малалла тăсасса хуçалăхра çирĕп шанаççĕ.

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Уй-хир хыпарĕсем

Вырмана хатĕрленсе

Ыранхи кунпа пурăнакан хресчен паян симĕс ĕç çипе пĕрлех акнă-лартнă культурăсене тĕрĕс-тĕкел пухса кĕртессине те кун йĕркинчен кăлармасть. Ĕнер çак тĕллевпе ял хуçалăх производство кооперативĕсен тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсен ертӳçисемпе район шайĕнчи канашлу иртрĕ. Вырмана тухассипе хатĕрленӳ ĕçĕсем епле шайрипе паллашнă хыççăн ертӳçĕсем вăрлăх туса илессипе ĕçлекен хуçалăхсен пысăк репродукциллĕ тырă-пулă ӳсекен уйĕсене çитсе курчĕç. Çак çул çӳрев кĕр акипе çыхăнни кашниншĕнех паллă.

Канашлу пирки хаçатăн çитес номерĕнче тĕплĕнрех каласа парăпăр.

86 процент утă пур

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем сенажпа силос янтăлас ĕçе тытăннă май вĕсем иртнĕ кунсенче утă мĕн чухлĕ янтăлани пирки те каласма юрать. Утă уйăхĕн 23-мĕшĕ тĕлне районти ял хуçалăх производство кооперативĕсем обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли 4748 тонна (86 процент) паха утă янтăлама ĕлкĕрнĕ. Утă хатĕрлес плана Чкалов яч. хис., Е. Андреев яч. хис. хуçалăхсемпе «Колос» общество 2,5 – 3 хут ирттерсе пурнăçланă.

Сенаж хываççĕ

Паян çĕр ĕçченĕн пĕтĕм ĕç вăйĕ силоспа сенаж хывса хăварас çĕрте. Оперативлă кăтартусене пăхсан тунти кун тĕлне уй-хир ĕçченĕ район шайĕнче силос хатĕрлес плана 13 процента (2565 тонна) çитернĕ. Çав вăхăтрах хуçалăхсем сенаж янтăлассипе вăр-вартарах пулни курăнать: пĕтĕмĕшле кăтарту 7806 тонна (46 процент). Сенаж хатĕрлессипе «Восток» (930 тонна е 163 процент), Чапаев яч. хис. (750 тонна е 125 процент), «Герой» (1010 тонна е 97 процент) хуçалăхсем ыттисенчен маларах пыраççĕ пулсан, силос янтăлассипе Е. Андреев яч. хис. (1365 тонна е 195 процент), «Оринино» (1200 тонна е 93 процент) малта.

Кĕр кунĕсем çитиччен районти çĕр ĕçченĕн пĕтĕмпе 5526 тонна утă, 16830 тонна сенаж, 19137 тонна силос янтăламалла.

А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.

Фермăсенчи çу кунĕсем

Камăн сăвăм пысăкрах?

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче утă уйăхĕн 21-мĕшĕ тĕлне пĕр ĕне пуçне вăтам сăвăм мĕнле пулнине кăтартни (килограмма, «–» – сахалрах).

«Путь Ильича»	17,9	6,1
Суворов яч. хис.	17,5	1,3
Чкалов яч. хис.	17,1	6,1
АПФ «Колос»	15,0	0,7
«Свобода»	14,2	0,7
Ильич яч. хис.	14,3	-2,5
«Оринино»	13,9	2,5
Е. Андреев яч. хис.	14,0	6,2
«Герой»	12,2	0,9
«Восток»	10,2	2,2
«Ударник»	10,5	0,5
Чапаев яч. хис.	8,0	1,4
«Передовик»	7,3	-5,7
РАЙОНĔПЕ	**13,0**	**1,1**

ХУШСА КАЛАНИ. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче вăй хуракансемшĕн чи канăçăр кунсем пыраççĕ. Çаврăнăçуллисем выльăх апатне çителĕклĕ янтăлама та ĕлкĕрнĕ. Çакна валли çут çанталăк условийĕсем те меллĕ пулчĕç. Анчах хуçалăхсенчи вăтам сăвăм тивĕçтерсех каймасть-ха. Апла пулсан ӳсĕм çулĕнче ыттисем ĕçĕсене ответлăха туйсах пурнăçласа çитереймеççĕ. Пĕтĕмĕшле сăн ӳкерчĕк сводкăран аван курăнать.

Районти ял хуçалăх производство кооперативĕсем паян талăксерен пĕтĕмпе 26289 килограмм сĕт сăваççĕ. Ку вăл иртнĕ çулхинчен 600 килограмм нумайрах.

А. ПЕТРОВ.

Иыхрав

Черетсĕр лару – июлĕн 27-мĕшĕнче

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн кăçалхи июлĕн 20-мĕшĕнчи 24 № йышăнăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 20-мĕш ларăвне июлĕн 27-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче 10 сехетре пухма йышăннă.

Ларура пăхса тухма çак кун йĕркине сĕннĕ: «Депутатсен районти Пухăвĕн 2011 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнчи «О районном бюджете Моргаушского района Чувашской Республики на 2012 год» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен»; «Муркаш районĕн тĕрĕслевпе шутлав органĕ çинчен»; «Нанимателĕн (ĕç параканăн) полномочийĕсене пурнăçлакан муниципаллă служащисем служба йĕркелĕхне пурнăçланине тĕрĕслекен тата конфликтлă лару-тăрусене татса паракан комисси çинчен»; «Депутатсен районти Пухăвĕн «О внесении изменений в Устав Моргаушского района Чувашской Республики» йышăнăвĕн проекчĕпе публичнăй слушани ирттересси çинчен»; «Наградăлама тăратасси çинчен».

Пуху ларăвне район администрацийĕн структура подразделенийĕсен ертӳçисене, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, предприятисемпе организацисен тата учрежденисен ертӳçисене йыхравлаççĕ.

Ĕç укçи

Çын кĕсйинчине шутлама хушмаççĕ те...

Районĕпе пĕчĕк предпринимательство субъекчĕсемпе çыхăнман организацисенче кăçалхи январь–июнь уйăхĕсенче ĕç укçи шайĕ уйăхне 12810,5 пин тенкĕпе танлашнă. Ку вăл иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 24,4 процент пысăкрах. Асăннă организацисенче 5211 çын ĕçлет (унчченхинчен 123 çын сахалрах).

Республикипе вăтам ĕç укçи шайĕ 13625,9 пулнă е пĕлтĕрхи çав вăхăтринчен 24 процент ӳснĕ.

Хамăр инф.

Республикăра

100 миллион тенкĕне тивĕçме пултаратпăр

Утă уйăхĕн 23-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе, федераци ведомствисен территори органĕсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе планерка ирттернĕ.

ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова кăçалхи пĕрремĕш çур çулта Чăваш Республикин сывлăх сыхлавне 2011–2012 çулсенче модернизацилемелли программăна мĕнле пурнăçлани çинчен каласа панă.

Министр палăртнă тăрăх ку енĕпе пирĕн республика ытти регионсем хушшинче лайăх-хисен ретĕнче. Çавна май кăтартусене пурнăçланине, медицина пулăшăвĕн пахалăхне, унпа усă курма май пуррине, халăх сывлăхĕн тĕп кăтартăвĕсем мĕнле улшăнса пынине, демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăрава шута илнĕ. Комплексла хаклав пĕтĕмлетĕвĕсене Раççей Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви Федерацин ОМС фончĕ нормăланă страховани саппасĕн укçи-тенкине валеçнĕ чухне шута илĕ. «2012 çулта сывлăх сыхлавĕн тытăмне модернизацилеме эпир хушма 100 млн тенкĕ илме пултаратпăр», – палăртнă министр.

А. ЛЬВОВА.

Д. Медведев патне çыру çырнă

Пирĕн районти право йĕркине пăсассине хирĕç кĕрешекен комиссин иртнĕ ларăвĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев спирт пур шĕвеке, ал-урана сĕрме кăларакан шĕвеке сутакан харпăрлăх хуçисене çак пĕчĕк кĕленчесене сутма чарăнма чĕнсе каланăччĕ (сăмах халăхра калакан «фанфурик» тата ытти ĕçме юраман настойкĕсем пирки пырать). Комисси çак ыйтупа Чăваш Республикин Патшалăх Канашне те çырупа тухрĕ.

Çавăн хыççăн чăваш депутачĕсем те республикăра эрех ĕçесси тата алкоголизм ыйтăвĕсене сӳтсе яврĕç. 2012 çулхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăра пурĕ 21054 алкоголизмпа чирлĕ çынна регистрацилени паллă. Чир кăтартăвĕ – 100 пин çын пуçне 1683,6 (пĕлтĕрхинчен 1,4 процент ытларах). Ку вăл Атăлçи федераллă тăрăхри вăтам кăтартуран та, Раççейри вăтам кăтартуран та пысăк хисеп. Иртнĕ çур çулта республикăра ӳсĕрле преступлени тăвасси те палăрмаллах ӳснĕ – 85,9 процент чухлĕ!

Спирт пур шĕвеке Чăваш Енре кашни утăмрах, вăл шутра почта уйрăмĕсенче те, сутни – темиçе çулах ĕнтĕ кун йĕркинчен кайман ыйту. Республикăри лару-тăрава шута илсе Патшалăх Канашĕн депутачĕсем РФ Правительство пуçлăхĕ Д. Медведев патне çырупа тухнă. Унта спирт пур шĕвеке сутассинче васкавлă мерăсем йышăнма кирлине ыйтса çырнă.

Чăваш хĕрĕсем – Олимп вăйăисенче

Лондонра иртекен çуллахи вăтăрмĕш Олимп вăйăисене пирĕн çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командин йышĕнче чăваш хĕрĕсем те каяççĕ. Çăмăл атлетикăра палăрнă Альбина Майорова тата Татьяна Архипова (иккĕшĕ те марафона хутшăнаççĕ), Елена Наговицина (5000 метр), Кристина Савицкая (çичĕ енлĕ вăй виçесси), Ирина Калентьева велогонщица медальсемшĕн ăмăртĕç.

Иртнĕ шăмат кун спортсменсемпе республика Пуçлăхĕ М. Игнатьев тĕл пулса вĕсене ăнăçусем суннă.

Олимп вăйăисем июлĕн 27-мĕшĕнче пуçланаççĕ. Чăваш спортсменĕсем хутшăнакан ăмăртусене сăнама ан манăр.

Республикăри МИХсен информацийĕ тăрăх хатĕрленĕ.

Çырăнтару – 2012

Хаклă вулаканăм!

Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата август уйăхĕнчен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.

Вулакансене пĕлтернĕччĕ, июль уйăхĕнчен шăмат кунсенчи кăларăм 8 страницăпа тухма пуçларĕ.

Ял çынни кĕтет

"Таса шыв" программа

Правительство шайĕнче палăртнă "Таса шыв" программа районта епле пурнăçланать? Çак ыйту тавра калаçма эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕнчен, капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин управленийĕн ертӳçинчен В. НИКИТИНРАН ыйтрăм.

– Владимир Германович, асăннă ĕç хăш ял тăрăхĕсенче пырать?

– Паянхи кун тĕлне Москакасси ял тăрăхĕнчи Калмăккасси ялĕнче шыв пăрăхĕсем хурса пĕтернĕ. Пĕтĕмпе вара унăн тăршшĕ пĕр çухрăм ытла пулмалла. Çакăнта пурăнакансем ку таранччен çăлти шывпа усă курнă, шыв пăрăхĕ пулман.

Асăннă программăпа килĕшӳллĕн пурнăçламалли ĕç валли 5 миллион тенкĕ федераллă бюджетран, 3 миллион тенкĕ республика бюджетĕнчен тата ытти пайне вырăнти бюджетран уйăрнă. Туятăр пулĕ, пĕр яла шывпа тивĕçтересси кăна мĕн хак ларать.

– Ытти ял тăрăхĕсене тивĕçтересси вара еплерех пырать?

– Паллах, пур ялти ĕçе те пĕр харăс пуçлаймăн, ыйту пысăк укçа-тенкĕпе çыхăннă вĕт. Халĕ вара Ильинка ял тăрăхĕнчи Мемеккасси, Вăрманкасси, Шерĕк ялĕсенче пурăнакансене те ĕçмелли пахалăхлă шывпа тивĕçтерес ыйту çивĕч тăрать. Кунта чи малтан скважина чавмалла, башня тумалла. Çак ĕç валли те бюджетсенчен укçа-тенкĕ уйăрнă.

Каярах вара май пур таран ытти ялсемпе те ĕçлемелле.

– Малашне хăш ялсемпе ĕçлеме палăртатăр?

– Çитес вăхăт валли Хорнуй ялĕпе проект хатĕрленĕ.

Р. ИЛЛАРИОНОВА
калаçнă.

2012 çул – Раççей историйĕн çулталăкĕ

65 çул иртрĕ унтанпа

Москакассинчи çыхăну уйрăмĕн çуралнă кунĕ 1946 çулхи ноябрĕн 26-мĕшĕ шутланать. Акă мĕнлерех пулчĕ вăл. Эпĕ Москакассинчи тулли мар вăтам шкулта хуçалăх ĕçĕсене пурнăçлаканра тăрăшаттăм. Çав кун шкулта пĕр класра ваннă кантăка лартаттăм. Атте Никифор Николаевич шкула пычĕ те мана районтан пынă çын кĕтнине пĕлтерчĕ.

Мана кĕтекен çынпа паллашрăмăр. Вăл Сĕнтĕрти çыхăну кантурĕн пуçлăхĕ Андрей Курдыков пулчĕ. «Райĕçтăвкомпа райком ĕçченĕсем санăн кандидатурăна ырланипе килтĕм»,– терĕ вăл. Мĕнпе усă кӳме пултарăп-ши тесе шухăшлатăп. «Эсĕ паянтан пуçласа республикăсем хушшинчи пысăк ылмаштару пункчĕн пуçлăхĕ пулатăн»,– терĕ. Çав кунах каçалапа Шупашкартан машинăсемпе район валли почта илсе килесси, çавсене йĕркеллĕ шутласа йышăнса юлмалли пирки пĕлтерчĕ. Чăваш Республикинчи Сĕнтĕр, Муркаш, Советски, Етĕрне районĕсем валли, Çармăс Республикинчен виçĕ район валли: Еласы, Юрино, Козьмодемьянск. Тепĕр кунне асăннă районсенчен килекен почтăна йышăнса Шупашкара ăсатмалла. Вăт çапла кашни кун. Кану кунĕ те çук. Муркаш, Советски, Етĕрне почтине Муркаша ăсатмалла, Сĕнтĕр, Юрино, Еласы, Козьмодемьянск почтине – Сĕнтĕре.

Кăнтăрла иртсен 3 сехет çитеспе манăн служба ĕçĕ пуçланчĕ. Андрей Матвеевичран ыйтсаччĕ-ха манăн почта машинине ăçта кĕтмелли пирки. Килтех пул, хăйсемех тупаççĕ сана тенĕччĕ вăл. Çапла вара палламан арçынпа хĕрарăм пычĕç кĕчĕç. Шоферпа пĕрле çӳрекенĕсем пулнă-ха кусем. Яла машинăсем кĕреймеççĕ. Уя тухрăмăр аттепе. Пĕр полуторка тата тепĕр пикап çинчи почтăна йышăнса юлтăмăр та çунашкапа туртса килти кĕлете вырнаçтартăмăр.

Ку халĕ хăнăхман ĕç, ăçтан пуçласа мĕнле вĕçлемелле? Çапла майпа тул çутăличчен хунар çутипе 7 район почтине уйрăммăн шута илсе пайласа пĕтертĕмĕр.

Эпир аттепе кĕлетрен тухнă çĕре Андрей Матвеевич Сĕнтĕртен çуранах çитрĕ те пуçланчĕ вара экстреннăй вĕрентӳ пекки. Кунта халь ыйхă пирки шухăшламалли çук. Хурал пулма аттенех вырнаçтарчĕ вăл. Манăн почтăпа пĕрле çӳрекен тупмалла. Ачаранах пĕрле ӳснĕ, салтакран килнĕ таса чунлă Алексей Кукушкина вырнаçтартăмăр.

Тепĕр темиçе кунтан телефон вырнаçтарчĕç. Çакна вара сенсациех темелле пуль – Москакасси ялĕнче пĕрремĕш телефон. Тепĕр телефон Ахмане ял Советĕнче пулнă.

Çапла вара пирĕн кил пĕчĕк автостанци пекех пулса тăчĕ. Мĕншĕн тесен Сĕнтĕре, Муркаша нимĕнле машина таврашĕ çӳреме те çул пулман. Çавна май районти учрежденисен представителĕсене конюхĕсем лашапа пирĕн пата çитереççĕ те Шупашкара каякансем киличчен кĕтеççĕ е тепĕр кунхине илме килеççĕ. Телефон пур-çке çыхăнма. Хăш-пĕр кун 5–6 лашаран та иртетчĕ кил хушшинче. Çыннисем вара пӳртре. Вăл вăхăтра Шупашкар çулĕ те пĕр вĕçĕмех уçă пулман çава тухичченех.

Муркашри çыхăну кантурĕн пуçлăхĕ Петр Синичкин, фельдъегерĕ Роман Яриков, Сĕнтĕрĕн пуçлăхĕ Андрей Курдыков, фельдъегерĕ Кузьма Иванов пулнă. Халĕ çук ĕнтĕ вĕсем.

Çавăн пек те пулкалатчĕ. Акă почта машинине кĕтетпĕр. Каç пулмах пуçлать – çук. Шупашкар çулĕ çинче чарăнса ларнă та пĕр-пĕр лесник çуртĕнчен шăнкăравлаççĕ. К. Иванов, Р. Яриков фельдъегерьсем, эпĕ, А. Кукушкин икĕ-виçĕ лашапа хирĕç каяттăмăрччĕ темĕнле çанталăк пулсан та. Хыркасси таранах кайни те сахал мар пулнă. Паллах, лайăх çанталăкра çул хупăнмастьха. Калайкассине, Шомик çул юппине, Калмăккассине хирĕç тăтăшах кайма тивнĕ.

Юрать-ха ăçта телефон пур, унтан шăнкăравлама пулать. Машина Калмăккасси патне çитеспе е кунтарах килсен чарăнсан вара Шупашкарти пĕрле çӳрекен Москакассине çуран килетчĕ, каялла лашапа лартса каяттăмăр.

Шупашкартан тухнă почта машини çул çук пирки Москакассине çитмесĕр каялла кайни пулман. Ку вăл преступлени шутланнă. Кунта 7 район почти вĕт. Хăй вăхăтĕнче М.И. Калинин: «Связь – это нерв страны»,– тесе калани вăйра пулнă.

Пирĕн кил автостанци пекех пулнă тенĕрен, хĕллехи вăхăтра икĕ районти çывăхарахри çыхăну уйрăмĕсен пуçлăхĕсемпе семинар-канашлу ирттерме Шупашкартан Чăваш çыхăну управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ Илья Иваняков темиçе те килнĕ. Хĕллехи вăхăтра 7 район почтипе ĕçлесси 1949 çулчченех тăсăлнă. 1950 çулта та.

Çĕнĕрен туса лартнă почта çуртĕнче Свердловск хулинчи çыхăну техникумĕнче ятарлă пĕлӳ илнĕ хыççăн 1952 çулта пĕтĕмлетнĕ çыхăну уйрăмĕн функцийĕпе ĕçлеме тытăнтăм. Çав вăхăтрах перекет кассипе те. Çапла вара çыхăну ĕçĕнче 20 çула яхăн ĕçлерĕм.

Лазарь КОЖЕЛЕЕВ.

Спорт вĕренӳре чăрмав мар

Хастар çамрăк

«Манăн пушă вăхăт пачах та çук, эпĕ питĕ васкатăп», – пулчĕç Сашăн пĕрремĕш сăмахĕсем. Çапах та манпа кăшт кăна калаçма кăмăлĕ тупăнчĕ. Ун пекех ăçта васкать-ши тесе тĕлĕнтĕм эпĕ. Вĕренĕве хыçа хăварнă, тин кăна алла диплом илнĕ.

– Тренировкăсем вара вĕçленмен-ха, – терĕ вăл ман шухăша татса.

Çапла, Муркаш салинче пурăнакан Александр Николаевăн пурнăçĕ – тăтăш васкавлă çул çӳрев: Шупашкарта, Адлерта е тата ытти хуласенче. Вăл истори факультетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ. Апла пулин те ăна спорт ăмăртăвĕсемсĕр питĕ кичем. Çавăнпа та вăл малашлăха çак енĕпех тăсма шутлать, аспирантурăна кайма ĕмĕтленет. Нимĕн те калаймăн, ăс-тăн çивĕчлĕхĕ те, сывă пурнăç йĕрки патне туртăнас туйăм та пысăк.

Спорт енĕпе Раççей шайне çĕклентĕн, санăн ятна чылайăшĕ пĕлет, сăн ӳкерчĕкӳ те çӳллĕ шайра ялкăшать. Хăçан пуçланчĕ-ха ку туртăм тесе кăсăклантăм эпĕ.

– Кирек епле çыннăн та вăл е ку ĕç патне туртăм ытларах пулмалла. Манăн вара куç япăх куракансен Шупашкар хулинчи коррекци шкулĕнче вĕреннĕ çулсенче спортпа туслашасси вăйлă аталанчĕ. Çăмăл атлетика, шашка ăмăртăвĕсенче Чăваш Республикин чысне пĕрре мар тивĕçлĕ хӳтĕленĕ. Хам пурнăçа спорт енĕпех малалла тăсас тетĕп, – пулчĕç унăн сăмахĕсем.

Туризм спорчĕ вара уннăн уйрăмах илĕртӳллĕ, çавăнпах та пулĕ Раççей чемпионатĕнчен виççĕмĕш çул ĕнтĕ призер пулса таврăнчĕ. Куç япăх куракансем хушшинче ирттерекен Тула, Уфа, Омск, Адлер тата ытти хуласенчи пĕтĕм Раççей сборĕсене хутшăнчĕ. Пĕтĕмĕшле илсен вара вăл сывă пурнăç йĕркине тытса пыракан пултаруллă çамрăк, ыттисемшĕн ырă тĕслĕх.

Çӳлерех асăннă сăмахсене çирĕплетекен Хисеп хучĕсемпе Тав çырăвĕсене вара шутласа кăларма та йывăр. Раççей Федерацийĕн спортпа туризм тата çамрăксен политикин министрĕ алă пусниех саккăр, ыттисене шутламăп та. Пĕтĕмĕшле илсен вĕсене ытларах пĕрремĕш вырăн тивĕçнĕшĕн панă. Çавăн пекех пӳлĕмре тĕрлĕ медаль хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне тупнă. Кашниннăн вара сахал мар тăрăшнă.

Саша Раççейри куç курманнисен районти обществăлла организацийĕн активлă членĕ пулнă май пушă вăхăт пулнине кура чылай ĕçе хутшăнать. Анлă тавракурăмлă спортăн пысăк тусĕ Саша Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендине тивĕçнĕ, пĕр хутчен кăна та мар. Çӳлерех асăннă çитĕнӳ – йăлт унăн тăрăшулăхĕ. Çапла пулни, паллах, ашшĕ-амăшĕ тĕрĕс воспитани панин ырă çимĕçĕ.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

Çĕнтерӳçĕ

Викторина çĕнтерӳçи ĕçре те хастар

Район хаçачĕ Е.А. Андреев çуралнăранпа 100 çул çитнине халалласа ирттернĕ «Ĕç Геройĕ Е. Андреев пирки мĕн пĕлетĕр?» викторина итогĕсене пичетленĕччĕ ĕнтĕ. Комисси викторина итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май 1-мĕш вырăна Çатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта пĕрремĕш çул мар пуçламăш классене вĕрентекен Светлана Васильевна Федоровăна пама йышăнни пирки те хыпарланăччĕ.

Çапла вара Светлана Васильевна Хисеп хучĕпе парнесене кăна мар, Е.А. Андреев çуралнăранпа 100 çул çитнине халалласа ятарласа кăларнă медале те тивĕç пулчĕ.

Çĕнтерӳçĕне саламланă май çавна та каласа хăвармалла. Светлана Федорова ĕçре те тăрăшулăхпа палăрса тăрать. Шанса панă ĕçе яланах ответлăха туйса пурнăçлама хăнăхнă. Çавна май шкул коллективĕнче те, вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем хушшинче те пысăк хисепре.

Сăн ӳкерчĕкре: викторина çĕнтерӳçи С. Федорова.
В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Следствии комитетĕнчен

Хăнана кайма та пĕлмелле

Июлĕн 2-мĕшĕнче Çĕньял Очăкасси ялĕнчи арçын эрех ĕçсе ӳсĕрĕлнĕскер хĕрӳленсех кайнă пулмалла, тен вăл хăйне валли тус-юлташ тупма шутланă. Çапла вара çав ялти хĕрарăм патне хăнана кĕме шутланă. Хирĕçленине пăхмасăр унăн хуçалăхне кĕнĕ. Çакă вара преступлени туни пулать. Саккун вара тепĕр çын хуçалăхне вăйпа кĕме никамăн та ирĕк çуккине çирĕплетет.

И. ФЕДОТОВ,
аслă следователь.

Миграци службинчен

Паспортра – пӳрне палли

Паспорт тĕп документ пулнине ăнланатпăр. Юлташăм вара нумаях пулмасть çĕнĕ паспорт çине гражданинăн пӳрне йĕрĕсене те кĕртни пирки ăнлантарчĕ. Тĕрĕс-и çакă е çук?

А. САМАШКОВА.

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ.

Анна Ильинична çырăвĕпе эпир Раççейри Федераллă Миграци Службин Чăваш Республикинчи Управленийĕн Муркаш районĕнчи территори пункчĕн пуçлăхне Л. ПЛЕЧОВĂНА паллаштартăмăр. Любовь Геннадьевна пире хуравпа кĕттермерĕ:

– Раççейри Федераллă Миграци Службин Чăваш Республикинчи Управленийĕн Муркаш районĕнчи территори пункчĕн тĕп ĕçĕ вăл – патшалăхăн миграци политикине тытса пырасси, çак ĕçре саккунлăха малта тăратасси, гражданство тата паспорт çинчен калакан законодательствăсене тĕрĕс пурнăçласа пырасси.

Маларах каланине ăнланса эпир хамăр патăмăра килекен кашни гражданинăн ыйтăвнех вăхăтра та туллин тивĕçтерме тăрăшатпăр. Вулавçă ыйтăвĕ çине хуравласа вара çакна пĕлтеретĕп. Пирĕн ĕç-хĕл патшалăх функцийĕсене пурнăçлассипе çыхăннă. Çав функцисенчен пĕри вăл – граждансен ирĕкĕпе пӳрне йĕрĕсене (дактилоскопи информацийĕ) регистрацилесси. Ку ĕçе эпир 1998 çулхи утă уйăхĕн 25-мĕшĕнче вăя кĕнĕ 128-мĕш федераллă саккунпа пурнăçлатпăр.

Граждансем хăйсен ирĕкĕпе пӳрне йĕрĕсене регистрацилени вĕсен прависене хĕсмест. Ăна туса ирттерес текенсен Раççейри Федераллă Миграци Службин Чăваш Республикинчи Управленийĕн специалисчĕсем патне заявленипе тухмалла кăна.

Официально

Чувашская Республика
Моргаушский район
Собрание депутатов
Моргаушского сельского поселения
РЕШЕНИЕ
23.07.2012 г. № С-25/1
село Моргауши
О назначении досрочных выборов главы Моргаушского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

В соответствии с пунктом 8 статьи 71 Федерального закона от 12.06.2002 г. № 67-ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», со статьями 5 и 49 Закона Чувашской Республики от 25.11.2003 г. № 41 «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике», Уставом Моргаушского сельского поселения Моргаушского района Собрание депутатов Моргаушского сельского поселения **решило**:

1. Назначить досрочные выборы главы Моргаушского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики на 14 октября 2012 года.

2. Направить настоящее решение в Центральную избирательную комиссию Чувашской Республики.

3. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию.

Заместитель председателя Собрания депутатов Моргаушского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики
Е.С. КУЛИКОВА.

Чувашская Республика
Моргаушский район
Собрание депутатов
Чуманкасинского сельского поселения
РЕШЕНИЕ
23.07.2012 г. № С-15/1
д. Одаркино
О назначении досрочных выборов главы Чуманкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

В соответствии с пунктом 8 статьи 71 Федерального закона от 12.06.2002 г. № 67-ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», со статьями 5 и 49 Закона Чувашской Республики от 25.11.2003 г. № 41 «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике», Уставом Чуманкасинского сельского поселения Моргаушского района МОРГАУШСКОЕ РАЙОННОЕ СОБРАНИЕ ДЕПУТАТОВ **РЕШИЛО**:

1. Назначить досрочные выборы главы Чуманкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики на 14 октября 2012 года.

2. Направить настоящее решение в Центральную избирательную комиссию Чувашской Республики.

3. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию.

Заместитель главы Чуманкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики
З.И. ИВАНОВА.

Чувашская Республика
Моргаушский район
Собрание депутатов
Юськасинского сельского поселения
РЕШЕНИЕ
23.07.2012 г. № С-18/3
с. Юськасы
О назначении досрочных выборов главы Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

В соответствии с пунктом 8 статьи 71 Федерального закона от 12.06.2002 г. № 67-ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», со статьями 5 и 49 Закона Чувашской Республики от 25.11.2003 г. № 41 «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике», Уставом Юськасинского сельского поселения Моргаушского района МОРГАУШСКОЕ РАЙОННОЕ СОБРАНИЕ ДЕПУТАТОВ **РЕШИЛО**:

1. Назначить досрочные выборы главы Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики на 14 октября 2012 года.

2. Направить настоящее решение в Центральную избирательную комиссию Чувашской Республики.

3. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию.

Заместитель главы Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики
Л.В. ПАВЛОВ.

Çар çапăçăвĕсен ветеранĕсен, инваличĕсен тата вĕсен çемье членĕсен кану кунĕнчен

«Пĕр тивĕçе пурнăçланă, паян та пĕрле»

23 çул иртрĕ унтанпа. Совет салтакĕсене кӳршĕллĕ Афганистан Республикинчен кăларнăранпа хыçа юлнă çак вăхăтра çуралса ӳснĕ яшсем те çар ретне тăма пуçларĕç... Аякри вăрçăра маларах пулнисен ывăлĕсем Çурçĕр Кавказра Конституци йĕркине çирĕплетессишĕн службăра тăма та ĕлкĕрчĕç, ашшĕсен ятне ямарĕç. Ĕнерхи салтаксем – паян та обществăн çирĕп тĕрекĕ. Çакна Афганистанти вăрçă инваличĕсен тата çар суранĕсем илнисен – «Вăрçă инваличĕсен» – Пĕтĕм Раççейри обществăлла организацин Чăваш Республикинчи организацийĕ (ЧРОООООИВА) кун йĕркинче çирĕп тытса пырать. Асăннă организацин Муркаш районĕнчи уйăмĕн пуçарăвĕпе иккĕмĕш çул ĕнтĕ ĕнерхи салтаксем Каршлăх вăрманĕ патĕнчи улăхра кану кунĕ ирттереççĕ. Утă уйăхĕн 14-мĕшĕнче кăçал та вĕсем республикăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен пысăк йышпа пухăнчĕç. Паттăрсене саламлама ЧРОООООИВА ертӳçипе Г. Матвеевпа пĕрле ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ, сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ А. Самойлова, Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев хутшăнчĕç.

– Çĕр-шыв интересĕсене хӳтĕлесе Афганистан Республикинчи вăрça вунă çул хутшăннă çар подразделенийĕсене унтан 1989 çулхи нарăсăн 15-мĕшĕнче кăларчĕç. Пирĕн салтаксемпе офицерсемшĕн унти вăрçă тинех чарăнчĕ. Анчах сăртлăтуллă çĕр-шыври çар операцийĕсем интернационалист-салтаксен асĕнчен нихăçан та тухмĕç. Вĕсен паттăрлăхĕ те пирĕн асрах упранĕ, – терĕ кану кунне уçса А. Самойлова. – Эсир çакнашкал кану кунне йĕркелеме пултарни – вăрçă инваличĕсемпе вĕсен çемье членĕсен реабилитацийĕн черетлĕ утăмĕ.

Унтан кану кунне пухăннисене Алла Владимировна ЧР Пуçлăхĕн М. Игнатьевăн Указĕпе паллаштарчĕ. Унпа килĕшӳллĕн ЧРОООООИВА ертӳçине, Афганистан Республикинчи вăрçăра Ми-24 вертолетсен ушкăнĕн командирĕ пулнă Г. Матвеева «Чăваш Республикинчи халăхăн социаллă хӳтĕлевĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ят панă. Çар операцийĕнчи паттăрлăхшăн хăй вăхăтĕнче Хĕрлĕ Ялав орденне тивĕçнĕ майорăн черетлĕ награди çĕр-шыв тата республика ертӳçисем ĕнерхи салтаксем – вăрçă инваличĕсем – пирки манманнине çирĕплетрĕ.

Канăва хутшăннисем хушшинче çав кун район администрацийĕн Тав хучĕсене тивĕçнисем те, интернационалист-салтаксен республикăри ăмăртăвĕнче тунă çитĕнӳсемшĕн парне илнисем те, ырă пуçарура обществăлла активлăхпа палăрнăшăн медальсемпе наградăланнисем те пулчĕç.

– Паянхи хаклава кашниех ĕçпе çирĕплетнĕ. Çапах та пуринчен те паллăрах парне вăл – Муркашсем пире çакнашкал кану кунĕ йĕркелесе пама пултарни. Кунти илемлĕ вырăн, таса çăл куçсем тата унта кайса çăвăнса тасалма май пулни – ĕнерхи вăрçă участникĕсемпе инваличĕсемшĕн уйрăм чыс, – терĕ хăйĕн тав сăмахĕнче Г. Матвеев.

Каршлăх вăрманĕ çумĕнчи улăхра ĕнерхи салтаксен мăшăрĕсем те, Афганистан вăрçин тутине хĕр пуççăн тутаннă хĕрарăмсем те пулчĕç.

– Эпĕ Етĕрне районĕнчи Анат Ирçе ялĕнче çуралса ӳснĕ. Шкул хыççăн химик пĕлĕвне илсен шыв тасатакан химик-лаборант пулса ĕçлеме 1986–1987 çулсенче хам ирĕкпе Афганистана кайрăм. Тантăш йĕкĕтсем çар заданийĕсене кайнине пăхма питĕ йывăрччĕ. Çухатусемпе таврăннине курсан вара... Паян та çав кунсене аса илме хурлăхлă, – апатçимĕç хатĕрленĕ çĕртех куççульне шăлса илсе калаçрĕ Раиса Ефимова 1986–1988 çулсенче Афганистанра пулнă Светлана Софронова çумне тăрса. – Чăваш хĕрĕсем нумайччĕ унта. Акă паян та вĕсен пĕр ушкăнĕ кунта. Вăрçă вутĕнчи çыхăнава татмастпăр.

– Паттăрсен ячĕсем ăруран ăрава куçмалла. Эпир çакна тума пултаратпăр пулсан, пирĕн ачасен чĕрисенче те паттăрлăх туйăмĕ иксĕлмĕ. Çакă сăмахпа мар, ĕçпе çирĕплентĕр тесе эпир Калайкассинчи вăтам шкулта Афганистан Республикинче çар тивĕçне пурнăçланă яшсене халалласа музей уçрăмăр. Пирĕн ĕç çамрăксенче патриотизм туйăмне вăйлатассине шанатпăр. Çак тăрăшулăхра интернационалист-салтаксемпе тачă çыхăну тытатпăр, – терĕ «Çарпа патриотизм ĕçĕнчи активлăхшăн» обществăлла медале тивĕçнĕ Е. Ерагин вĕрентекен.

Афганистанра службăра тăнă салтаксен районти Совечĕн председателĕ В. Киршев та çак тĕл пулу пур енлĕ усăллă пулни çинче чарăнса тăчĕ. Кашни вăрçă вăл – вилĕм, ишĕлчĕк çуртсем, куççуль. Вячеслав Евсеевич шучĕпе çакăнтан хăтăлас тесен ачаран çĕр-шыва юратмалла, пĕлĕве ӳстермелле, сывлăха çирĕплетмелле.

– Пирĕн районтан çавăнти вăрçă вутĕнче 144-ăн пулчĕç, 7-шĕ çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçласа пуç хучĕ. Тайма пуç вĕсене, – терĕ хăйĕн сăмахĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев.

А. БЕЛОВ.

Обществăлла организацисенче

Зеленодольск хулине çитсе килнĕ

Раççейри куç курманнисен районти обществăлла организацийĕн пилĕк представителĕ Чăваш Республикин делегацийĕ шутĕнче Тутар Республикинчи Зеленодольск хулине ĕçлĕ тĕл пулăва çитсе килчĕ. Икĕ республика ĕçтешĕсен инвалидсен ĕç-хĕлĕ пирки калаçмалли, сӳтсе явмалли вара чылай. Тутарсемшĕн те, чăвашсемшĕн те ĕçе çапла майпа йĕркелени, паллах, вырăнлă, пĕр-пĕрин опычĕпе паллашни те питĕ кирлĕ.

Куç курманнисене тивĕçтерекен Тутар Республикинчи ятарлă библиотека та тĕл пулăва кăсăклă ирттерессишĕн чылай тăрăшнă. Кăçал истори çулталăкĕ пулнă май хăш-пĕр ĕç-хĕл ун тавра пулнă. Çакăнпа çыхăннă ăс-тăн çивĕчлĕхне тĕрĕслекен ыйтусем чăвашсене йывăрлăх кӳмен. Тĕл пулăва тĕрлĕ енлĕ хатĕрленĕ. Икĕ чĕлхепе янăракан юрă-кĕвĕре, сăвăра халăх йăли-йĕрки аван сăнланнă.

– Ăсталăха пысăк йыш умĕнче кăтартма сывлăх енчен хăш-пĕр кăлтăк пулни пачах та чăрмав мар, чи пĕлтерĕшли вара харпăр хăйне ыттисем умĕнче пĕр шайра тытма пĕлни тата пултарни. Çирĕплетсех калама пултаратăп. Асăннă категорири çынсем пурнăçа ытларах хакларçĕ, вĕсене Турри пултарулăхне, чăтăмлăхне те ытларах кӳнĕ. Хăшĕсем пачах та курмаççĕ, çапах та çӳллĕ шая çĕкленеççĕ, – палăртрĕ хăйĕн шухăшне çӳлерех асăннă организаци ертӳçи А. Михайлова.

Чăваш Республикин делегацийĕ ют тăрăхра пысăк пултарулăхпа палăрнă. Ĕçлĕ çул çӳрев икĕ енлĕ килĕшӳпе вĕçленнĕ, малашне те тĕрлĕ республика ĕçтешĕсемпе тĕл пулма каласса татăлнă.

Р. МАКАРОВА.

Тăрăшуллă пулнăран

Районта ирттернĕ Акатуйра эсир сăн ӳкерчĕкре кураканГалина Пантелеймоновна Ковалевăна «Ядринмолоко» акционерсен уçă обществин Хисеп грамотине парса чысларĕç. Галина Пантелеймоновна çак чыса чăннипех тивĕç. Вăл «Оринино» хуçалăхăн сĕт-çу комплексĕнче чылайранпа тăрăшать.

В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Фермăсем тĕлĕшпе тимлĕх кирлĕ

01 пĕлтерет

Ирĕке кайнă вут-çулăм шелсĕр. Вăл туххăмрах хăй хыççăн кăвар хăварса пурăнмалли çурт-йĕре, хушма хуралтăсене, пурлăха илсе тухса каять. Унран та ытларах инкек вăл – пушарта çынсен пурнăçĕ татăлни. Халĕ калани кашниннĕнех паллă пулин те пушар хуралĕнче тăракансем час-часах пулăшăва васкани кил-çурт хуçисем, производствăри явапла специалистсем нумай чух пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманни çинчен калать. Пушар пуçланнин тĕп сăлтавĕсем: уçă çулăмпа асăрханусăр пулни – 30 процент, электроприборсене эксплуатацилес правилăсене пăсни – 30 процент, ачасем шăрпăкпа выляни – 5 процент, кăмакасен юсавсăрлăхĕ – 25 процент. Халĕ илсе кăтартнă цифрăсем пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнасси çине пысăк тимлĕх уйăрмалли пирки калаççĕ.

Паян пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрлессипе ĕçсем пыраççĕ. Пирĕн малтанхи тĕрĕслевсенче «Герой» хуçалăхăн Çĕньял Шурчари майăракаллă шултра выльăхсен сарайĕнче тата «Оринино» кооперативри Патаккассинчи сĕт комплексĕнче çи виттисем юсани куç умне пулчĕ. Çакнашкал ĕçсене «Восток» хуçалăхри ĕне ферминче те пурнăçламалли куç кĕрет. Мулкачкассинчи сĕт ферминче уйăх каялла вырăнти ĕçченсен çаврăнăçулăхне кура çеç пысăк инкекрен пăрăнса иртме пултарчĕç.

Ку инкек пирки ирттернĕ тĕрĕслевсем çакна çирĕплетрĕç. Сарай çи виттийĕ кивелнĕрен çумăр шывĕ электрорубильник çине кайнипе пулнă кĕске замыкани «хĕрлĕ автан» валли çул уçнă. Ферма ĕçченĕсем вăхăтра асăрханипе, тав Турра, ку хутĕнче çулăм вăй илеймерĕ.

Пулса иртни кашни пĕрлешӳллĕ хуçалăхах тимлĕхе ӳстерме ыйтать.

Ярославкăри уйрăм çыннăн килти хушма хуçалăхĕнче вара юсавсăр электропроводкăна пула утă уйăхĕн 16-мĕшĕнче çак сăлтавпа районти 6-мĕш пушара регистрацилерĕмĕр. Пĕтĕмпе вара паянхи куна районта кăçал 21 пушар пулчĕ. Ку вăл иртнĕ çулхи шайрах.

К. ПОПОВ,
патшалăх пушар надзорĕн инспекторĕ.

Следствии комитетĕнчен

Çур çул ĕçне пĕтĕмлетнĕ

РФ следствии комитечĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следствии пайĕ çур çулхи ĕçе пĕтĕмлетрĕ. Асăннă пай следователĕсем çак тапхăрта тĕрлĕ преступлени пирки пĕлтернĕ 366 ĕç тĕпченĕ, 82-шĕ тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă, суда 93 уголовлă ĕç тăратнă.

Асăннă пай ĕçне 2012 çулта хăш-пĕр улшăну кĕчĕ, çавна май следствии материалĕсем те йышланчĕç, коррупцине çыхăннисем те нумайланчĕç. Акă Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ тунă тăхăр преступлени тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе вĕçлесе суда тăратрăмăр.

Ирĕксĕрлесе ар çыхăнăвне кĕнипе пуçарнă преступленисем те чакмаççĕ, кун йышшисем пĕтĕмпе вун иккĕ пулнă. Тĕрлĕ сăлтавпа çын пурнăçне татнă вун пĕр преступленипе следствии ирттернĕ.

Пĕтĕмĕшле илсен преступленисене ытларах ӳсĕрле тăваççĕ. Çавăн пекех следствии пайĕн ĕçченĕсем суррогатлă алкоголь продукцийĕпе суту-илӳ тăвакансене тупса палăртассипе те çине тăрса ĕçлеççĕ. Ку тĕлĕшри преступленисемпе пĕрремĕш çур çулта вун çичĕ уголовлă ĕç пуçарнă.

А. ГАВРИЛОВ,
следствии комитечĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следствии пайĕн ертӳçин тивĕçне пурнăçлаканĕ.

Харпăр хăйне чарма пёлмесен

Лариса Александровна Ядыкова полици майорё шалти ёссен министерствин районти пайёнче чылай çул вăй хурать. Дознавательте ёçленё май йёркене пăснă темёнле çынпа та, вёсен тăванёсемпе те, кӳршисемпе те курса каласа тивет унăн. Акă иртнё кунсенче Лариса Александровна Юнкă ял тăрăхёнче пулса иртнё преступление тёпчесе пёлме вырăна тухса каласу ирттерчё. Ёç пирки – малаллахи йёркесенче.

Юрий Юнкă таврашёнче вăтăр çул ытла пурăнать. Ёçрен хăраса тăраканскер мар, çынпа йёркеллё хутшăнать, ырă кăмăллă – çапла палăртаççё ăна ял-йышра. Унăн хăйён çемйи. Икё ача ӳстереççё. Çемьене тăрантарас тесех ёнтё час-часах аяккa стройка ёçёсене тухса çӳренё. Кăçалтанпа вара вырăнпа выртакан амăшне пăхать. Вёсемпе пёрлех амăшён кайранхи упăшки те пурăнать. Ватăсене йёркеллех пăхса пурăнать арçын.

Ниçта та ёçлеме май килменрен ёнтё Юрăн лавккана кайма та укçитенки çитсех пыман. Çапла çуллахи пёр каçхине тăван мар ашшёнчен лавккана кайса килме тесе укçа «тапăнать». Лешё вара, апат-çимёç туянма хăех кайса çӳренёскер, хальхинче хăй те эрех ёçнё пулнăран-ши, килёшмест. Хирёçӳ шалтан шала кёрсе пырать. Ватă çыннăн чăтăмлăхё çитмест – вăл Юрие патакпа пуçран çапать. Юрий те, хёрёнкёскер, унпа нумай каласса тăмасть: пит-куçёнчен аллипе пёрре мар çапать. Хыççăн вара вырăн çине кайса выртать.

Кăшт вăхăт иртсен хуларан Юрăн мăшăрё çитет. Ана тăван мар ашшё пуç ыратнине калать. Çапла вара хёрарăм мён пулса иртнине те пёлет.

Тепёр пёр-ик кунтан кăна ялти фельдшера чёнеççё. Ватă арçынна пăхса илнё хыççăн фельдшер васкавлă пулăшу уйрăмне шăнкăравлать. Тăнсăр пулнă арçынна больницăра сиплеме тивет.

Эрех тиркесе тăман Юрий ун чух хăй ӳсёр пулнине те, хăйён айăпне те дознавательпе каласнă чух пётёмпех йышăнать: Уголовлă кодексăн 112 статйин 1 пайёнче çырса кăтартнă преступление – çыннăн сывлăхне вăтам сиен кӳни.

Тунă преступленишён арçыннăн явап тытмаллах. Наказани мёнле пулассине вара çитес вăхăтра миравай суд татса парё.

Н. НИКОЛАЕВА.

Пёлтерӳсем. Объявления

ООО «Виктория»

* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

СХПК им. В.И. Чапаева требуются комбайнеры на уборочные работы. Оплата договорная.
Тел.: 8-906-380-58-39.

* * *

Продаю песок речной, ОПГС с доставкой.
Тел.: 44-01-10. 10-10.

* * *

Требуются на постоянную работу в дорожное предприятие машинисты бульдозера ДТ-75, экскаватора ЕК-18, экскаватора ЮМЗ, грейдера ДЗ-143, погрузчика «Амкодор», водители на КамАЗ-самосвал, дорожные рабочие. Работа в Моргаушском районе. Тел.: 8-917-658-84-05.

* * *

Продается трактор МТЗ-80 1979 года выпуска, в хорошем рабочем состоянии. Кабина маленькая.
Тел.: 8-906-130-91-27, 8-902-660-82-38. 1-2.

* * *

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок и замок на ручках окон. Шестикамерный профиль по цене трехкамерного. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а.
Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 2-12.

* * *

Продаю польский пресс-подборщик тюковый «СИПМА», косилка польская новая, ворошилка польская новая. Тел.: 8-905-341-01-86. 2-2.

Прокуратурăран

Салтак ячё тухсан

Арçыннăн саккунпа çирёплетнё тӳрё тивёçё – салтака каясси. Апла пулин те унран пăрăнакансем те çук мар. Иртнё тапхăрта çар ёçне пурнăçлассинчен 74 гражданина хăтарнă. 49 яшăн çара каяс тапхăрне тепёр вăхăта куçарнă, вёсенчен 13-шё сывлăх тёлёшпе хавшак пулнипе, 36-шё – аслă вёренӳ заведенийёнче пёлӳ пухнипе.

Тёрлё сăлтава пула 23 яша çара кайма чёнекен повесткăна вăхăтра пама май килмен: 11-шё ăçта пулнине каярах тупса палăртнă, 12-шне тупма май килмен. Çар ретне тăрассинчен пăрăнакан пёр яш тёлёшпе следстви пайне материал тăратнă.

Вырăнти хăй тытăмлăх органёсенче призывниксем енёпе пурнăçламалли ёçе епле вăя кёртни пирки тёрёслев ирттернё май Йӳçкасси тата Шетмёпуç ял тăрăхёсенче çитменлёхсем тупса палăртнă. Çавăн пекех Чăваш Республикинчи Çар комиссариачён Муркашпа Элёк районёсен пайён ёçёнче те асăрхаттарусем пур. Район прокуратури çитменлёхсене çитес вăхăтра пётермеллине палăртнă.

И. ИЛЬИНА,
прокурор пулăшуçи.

Шкула каяс умён

Ачан кирек епле ёçёпе те кăсăкланăр

Ача пёрремёш класа кайма пуçличченех ашшё-амăшё те, ача хăй те хумханма тытăнать: умра ку таранччен пулманни, çённи. Çак хумханăва чакарма, ачан шкула каяс кăмăлне хăпартма мён тумалла-ха? Сире психолог канашёсем пулăшасса шанатпăр.

Шкула каясси, киле парса янă ёçсене пурнăçласси тата шкула каяссипе çыхăннă ытти ёçсемшён чи малтанах ачан ответлă пулмаллине ашшё-амăшён ăнланса илмелле. Паллах, ашшё-амăшё ачине пёр-пёр ёçе пурнăçлама пулăшать, анчах та вёсен тёкё парса кăна пымалла. Ашшё-амăшё çакăнпа килёшет пулсан ачан ответлăхё ӳсет, вăл ăнăçусем тума тăрăшать.

Пёрремёш класа каякан ача ирпе хăй тёллён тăма, тумтир суйласа тăхăнма, вырăн пуçтарма тата ирхи апатланăва палăртнă вăхăтра сётел хушшине ларма пултарать. Шкула мён киксе каймаллине те хăех ас туса юлма пултарать.

Шкула кайма пуçланă ачана ыттинчен ытларах «хăратаканни» – килти ёçе пурнăçласси. Шăпах çак ёçе пурнăçланă чух ача хăйне хăй хаклама вёренет, унăн ответлăхё ӳсет. Ачи шкулта лайăххисен ретёнче пултăр тесен вара ашшё-амăшён мён тумалла-ха?

Вёренӳ çулё пуçланиччен шкула кайма хатёрленекенпе пёрле ун валли ёç вырăнё йёркелемелле. Ачан ёç вырăнё телевизортан инçерех пултăр тесе тăрăшăр. Каярах вара пёрремёш хут киле панă ёçе тума пулăшмалла: мён хыççăн мён пурнăçламаллине ăнлантармалла кăна. Ачашăн килти ёçе ан тăвăр!

Ача шкултан кашни кунах савăк кăмăлпа таврăнасса ан кётёр. Тепёр чухне «çанталăк» ăмăр пулма та пултарать. Тен пёрпёр кун унăн шкула та каяс килмё. Кун пекки кашни шкул ачипех пулма пултарать. Анчах та çакна май ăнсăртран «чирлени» тăтăшах тёрёслев ёçёсем умён ан пултăр. Çавăнпа та ачан шкулти ёçёсемпе, унти пурнăçёпе кăсăклансах тăрăр. Хăш-пёр йывăр лару-тăруран ачăр хăй тёллён тухма пултарайманнине сисетёр пулсан ăна пулăшма васкăр, кирлё пулсан класс ертӳçипе те каласса пăхăр.

Тата тепёр самант пирки ан манăр. Сирён ачăра вёрентсе воспитани парассине тёппипех шкул çине ан хурăр. Шкул, паллах, ачана вёрентет, пётёмёшле воспитани парать. Ашшё-амăшён вара ача çакна кăмăлпах йышăнтăр тесе килте условисем туса памалла, ачан кирек епле ёçёпе те интересленсе тăмалла.

Н. ДИМИТРИЕВА хатёрленё.

Прогноз погоды

	среда 25 июля				четверг 26 июля				пятница 27 июля			
Местное время	04:00	10:00	16:00	22:00	04:00	10:00	16:00	22:00	04:00	10:00	16:00	22:00
Облачность %												
Осадки мм												
Температура °С	+14	+17	+22	+17	+13	+19	+22	+18	+17	+19	+24	+18
Давление мм	747	747	747	747	747	747	746	744	743	742	741	741
Влажность %	95	90	59	78	94	71	69	89	93	93	62	87
Ветер м/сек	4	5	5	1	3	3	3	2	4	4	2	1
	З	С-З	С-З	С-В	З	Ю-З	З	Ю	Ю-З	Ю-З	С-З	С-З
Солнце восход / заход		04:46	21:12			04:47	21:11			04:49	21:09	
Луна восход / заход		12:55	22:48			14:18	23:14			15:39	23:47	
фаза												

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 12-20.

* * *

ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:260301:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Исаев Эдуард Николаевич, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Изедеркино, ул. братьев Алексеевых, д. 24. Емельянова Ольга Николаевна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Изедеркино, ул. братьев Алексеевых, д. 24.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:260301:1. Адрес местоположения образующихся земельных участков: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, территория землепользования СХПК им. Чкалова, земельные участки расположены в центральной части кадастрового квартала 21:17:260103, каждый площадью по 1,31 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

Администрация Моргаушского района в районной газете «Çёнтерӳ ялавё» от 14 июля 2012 года за № 53 (8014) опубликовала сообщение о наличии свободного земельного участка распределяемого на праве долгосрочной аренды.

В связи с допущенной ошибкой в объявлении, вместо «местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Советская, для ведения установки временного торгового павильона, площадью 20 кв.м.» следует читать «местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Советская, для установки временного торгового павильона, площадью 20 кв.м.».

* * *

ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:210201:111, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Андреева Раиса Владимировна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Большие Токшики, ул. Ленина, д. 19.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:210201:111. Адрес местоположения образуемого земельного участка: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, территория землепользования СХПК «Динамо», земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:210201, площадью 2,66 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

Торговый Комплекс "ТЕРМИНАЛ"
КИРПИЧ
ГАЗОБЕТОН / ГАЗОСИЛИКАТ
более 500 видов
Тел: (8352) 30-55-10, 50-54-25 www.terminal18.ru
ЧР, г. Чебоксары, Канашское шоссе, 7/1
ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ

Çатракассинчи пётёмёшле пёлӳ паракан вăтам шкул коллективё кунта акăлчан чёлхине вёрентекенён В.В. Дмитриевăн амăшё **Таисия Николаевна ИВАНОВА** вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванёсемпе пёрле тарăннăн хурланни çинчен пёлтерет.

Муркаш районёнчи «Çёнтерӳ ялавё» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноссен ёçёсен, информаци политикин тата архив ёçён министерстви.
ЧР Культура, национальноссен ёçёсен, информаци политикин тата архив ёçён министерствин «Муркаш районён «Çёнтерӳ ялавё» хаçат редакцийё» автономи учрежденийё.

Тёп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялё, Мир урамё, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тёп редактор - 62-1-36, явапла секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайё - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайё - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийёсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ёçлекен управленийё 2009 çулхи раштавăн 7-мёшёнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрацилене.

Калăпăшё 1,0 пичет листи.
Ал çырăвёсене рецензилемеççё, каялла тавăрса памаççё, 2 страницăран пысăк-раххисене йышăнмаççё.
Рекламăпа пёлтерӳсен чăнлăхёшён вёсене паракансем явапла.

ИЗДАНИ ИНДЕКСЁ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйё Николаева Н.Н.
Пичете панă 24.07.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4493.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çёнтерӳ ялавё», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.